2-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942
ДЕКАБРЬ
19
ШАМАТКУН
293(6228) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

ГОРЬКИЙ, ВКП(б) ГОРЬКИЙ ОБКОМӖН СЕКРЕТАРЬНЕ РОДИОНОВ ЮЛТАША

Горький облаçӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсене, боевой самолетсен „Валерий Чкалов“ ятлӑ эскадрильине организацилемешкӗн Хӗрлӗ Çар фондне 60 миллион тенкӗ укçа пухса панӑскерсене—манран тӑванла салам калӑр тата Хӗрлӗ Çар ячӗпе тав тӑвӑр.

И. СТАЛИН.

ИВАНОВО, ВКП(б) ИВАНОВО ОБКОМӖН СЕКРЕТАРЬНЕ ПАЛЬЦЕВ ЮЛТАША

Иваново облаçӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсене, танксен „Ивановский колхозник“ ятлӑ колоннине организацилемешкӗн Хӗрлӗ Çар фондне 65 миллион та 187 пин тенкӗ укçа пухса панӑскерсене—манран тӑванла салам калӑр тата Хӗрлӗ Çар ячӗпе тав тӑвӑр.

И. СТАЛИН.

Чугунçула пулӑшасси — ӗççыннисен чыслӑ тивӗçӗ

Чугунçул транспорчӗ пирӗн халӑх хуçалӑхӗнче калама çук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Вӑл тыла фронтпа, ялхуçалӑхне промышленноçпа çыхӑнтарса, вӗсен ӗçпе кӗрешӳри ӑнӑçлӑхне татса парать. Вӑл фронта хӗçпӑшалсемпе боеприпассем, резервсемпе апат-çимӗççем, промышленноçа чӗрӗ таварсемпе материалсем парса тӑнинчен Хӗрлӗ Çарӑн кӗрешӳри çӗнтерӗвӗ, предприятисен ӗçри ӳсӗмӗ килет.

Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура пирӗн республикӑри железнодорожниксем те паллӑ çитӗнӳсем турӗç. Канаш станцийӗ яланхинчен тикӗсрех те тӗрӗсрех ӗçлеме пуçларӗ, транзитнӑйпа вырӑнти вагонсен простойне чакарчӗ, вокзалра тасалӑхпа йӗркелӗх кӳчӗ. Канаш станцийӗн лайӑх ӗçне Хусан чугунçулӗн управленийӗ пӗрре çеç мар паллӑ турӗ. Шупашкар станцийӗ, иртнӗ çулсенче юлса пынӑскер, юлашки вӑхӑтра йӗркеллӗ ӗçлекен станцисен хисепне кӗчӗ. Çавӑн пекех Улатӑрпа Çӗмӗрле станцийӗсен коллективӗсем те ӑмӑртура хӑйсен ӗçне лайӑхлатса пыраççӗ. Социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн ноябрьти итогӗсем тӑрӑх, Улатӑрти паровозсем юсакан завод (начальникӗ Крупский юлташ) Çулйӗр Халӑх Комиссариачӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавӗпе иккӗмӗш преми илме тивӗçлӗ пулчӗ.

Анчах кусем—ӑмӑртури малтанхи утӑмсем кӑна-ха. Железнодорожниксем умӗнче малашне татах та пысӑкрах задачӑсем тӑраççӗ. Вӗсен, хӗлӗн йывӑр условийӗсенче те пӗр чӑрмавсӑр ӗçлесе, фронтпа халӑх хуçалӑхӗн нушисене вӑхӑтра тивӗçтерсе тӑмалла.

Хӗл—чугунçул работникӗсемшӗн çирӗп экзамен. Хӗл вӗсем кирек мӗнле çанталӑкра та, кирек-мӗнле вӑхӑтра та ӗçлеме пултарнине тӗрӗслет. Çак тӗрӗслеве ӑнӑçлӑн иртерсе ярасси железнодорожниксенчен хӑйсенчен çеç мар, вӗсене пулӑшма тивӗçлӗ партипе совет организацисенчен, ӗççыннисенчен те нумай килет.

Пирӗн ӗççыннисем чугунçул транспорчӗ мӗнле ӗçленипе хытӑ интересленеççӗ, кирлӗ вӑхӑтра ӑна пулӑшса тӑраççӗ. Отечественнӑй вӑрçӑ кунӗсенче ӗççыннисем чугунçула паракан пулӑшу татах та ӳсрӗ. Партипе совет организацисем пуçарнипе колхозниксемпе служащисем иртерекен воскресниксем чугунçула пулӑшмалли лайӑх май пулса тӑчӗç.

Пирӗн колхозниксемпе служащисем, колхозсемпе учрежденисем хӑйсем чугунçулшӑн тӑрӑшнине уйрӑмах кӑçал кӗркунне, чугунçула хӗле кӗме хатӗрленӗ вӑхӑтра кӑтартрӗç. Сентябрӗн вӗçӗнче иртернӗ фронтовой вунӑкунлӑхра Канаш дистанцийӗнче çывӑхри колхозсемпе учрежденисенчен 2 пин çын ытла ӗçлерӗ. Вӗсем 370 погоннӑй метр çула юсарӗç, 5 пин погоннӑй метра яхӑн çула хӑпартса тӳрлетрӗç, темиçе пин погоннӑй метр çул çине хӑйӑр, шлак сарчӗç, юр тытмалли щитсем туса хатӗрлерӗç. Дистанцие хӗле хатӗрленме активлӑн пулӑшнӑшӑн Хусан чугунçулӗн Управленийӗ Канаш районӗнчи колхозниксемпе служащисенчен 21 çынна хисеплӗ грамотӑсемпе наградӑларӗ, 24 çынна тав турӗ. Унсӑр пуçне вӗсене пурне те 200—500-шер тенкӗ укçа парса премилерӗ. Фронтовой вунӑкунлӑха лайӑх организацилесе иртернӗшӗн ВКП(б) Канаш Горкомӗн секретарьне Н. Никитин юлташа Çулйӗр Халӑх Комиссарӗн наградине илме тӑратнӑ.

Чугунçул ӗçӗшӗн чӗререн тӑрӑшакан партипе совет организацисем железнодорожниксене вӑхӑтӑн-вӑхӑтӑн мар, пӗрмаях пулӑшса тӑраççӗ. Ноябрӗн вӗçӗпе декабрӗн пуçламӗшӗнче тӑнӑ çил-тӑманлӑ кунсенче Вӑрмар районӗнчи колхозниксем, чугунçул çине çуран тата лашасемпе тухса, линисене юртан тасатсах тӑчӗç, поездсене расписание пӑсмасӑр çӳреме условисем туса пачӗç. Парти райкомӗсемпе райсовет исполкомӗсем ертсе пынипе çакӑн пек тивӗçлӗ пулӑшӑва Вӑрнар, Çӗмӗрле районӗсенчи колхозниксемпе служащисем те тӑтӑшах парса тӑраççӗ. Вӑрнар районӗнчен чугунçул çинче пӗр таталмасӑр 10 лав, темиçе вуншар çын ӗçлет.

Анчах районсенчи партипе совет организацисем пурте мар-ха чугунçула пулӑшас ӗç çине тивӗçлипе çавӑрӑнса пӑхаççӗ. Сӑмах пуринчен ытла Куславкка райсовет исполкомӗпе ВКП(б) райкомне тивет. Вӗсем, çак ӗçе хакламаннине пула, чугунçула пулӑшма кирлӗ ӗç вӑйне—лашасемпе çынсене—нихӑçан та çителӗклӗ парса тӑмаççӗ. Çак хӗл пуçламӗшӗнчи çил-тӑманлӑ кунсенче Куславкка районӗнчен Тӗрлемес участокӗнче 10 çын лавпа, 120 çын çуран ӗçлемелле пулнӑ. Анчах ноябрӗн 29-мӗшӗнче унтан пӗр çын та ӗçлемен. Куславкка районӗ халӗ те ӗç вӑйне планпа палӑртнӑ чухлӗ уйӑрса памасть. Çакнах Канаш, Шӑхасан районӗсем пирки те каламалла. Вӗсен те хӑшпӗр чух лавсем тӑратас тӗлӗшпе чӑрмавсем пулкалаççӗ.

Чугунçул транспортне пулӑшассине халӗ, хӗл вӑхӑтӗнче, кунран-кун вӑйлатса пырас пулать. Линисене юртан тасатма, вагонсене вӑхӑтра пушатса тиеме, станцине валли топливо турттарма кирлӗ ӗç вӑйне районсен çийӗнчех тата çителӗклӗ таран уйӑрса памалла. Вырӑнти работниксенчен килекен чӑрмавсем пирӗн поездсем расписание пӑсса çӳренӗ тӗслӗхсем пачах та ан пулччӑр. Чугунçул транспорчӗ фронт ыйтнӑ пек хӑвӑрт, сехет механизмӗ пек тӗрӗс ӗçлетӗр. Партипе совет организацисен, хуçалӑх работникӗсен вӗсенчен железнодорожниксем мӗн ыйтнине пӗтӗмпех тивӗçтерес пулать, чугунçула вӑрçӑн иккӗмӗш хӗлӗнче ӗçлеме кирлӗ условисене пурне те туса парас пулать. Республикӑри районсен ку тӗлӗшпе лайӑх ӗçлекен Вӑрмар районӗпе Канаш хулинчен пример илмелле, чугунçула пулӑшас ӗçе вӗсем пек туса пыма вӗренмелле.

Чугунçул транспорчӗн ӗçне лайӑхлатса пырас тӗлӗшпе железнодорожниксен хӑйсен те нумай ӗçлемелле-ха. Чи малтанах, вӗсен поездсем графика пӑсса çӳренӗ тӗслӗхсене пӗтермелле, вырӑнтипе транзитнӑй вагонсен простойне норма таран чакармалла, çулйӗрӗн пур участокӗсене те лайӑх йӗркене кӗртмелле. Станцисемпе вокзалсенче йӗркелӗхпе тасалӑх туса çитерес, пассажирсене кӑмӑллӑн кӗтсе илсе ăсатас, грузсемпе пурлӑхсене çирӗп сыхлас тӗлӗшпе те чугунçул работникӗсен куллен тимлӗн ӗçлемелле. Железнодорожникӑн кашни ӗçрех тавçӑрулла та пуçарулла, кашни минутӑрах витӗмлӗ те сисӗмлӗ пулмалла.

Вӑрçӑн иккӗмӗш хӗлӗ пирӗн чугунçул транспорчӗшӗн çӗнӗ тӗрӗслев пулса тӑрать. Çак тӗрӗслеве иртернӗ çӗрте пирӗн железнодорожниксен, партипе совет организацисен, хуçалӑх работникӗсен алла-аллӑн тытӑнса ӗçлемелле, кирлӗ вӑхӑтра пӗр-пӗрне пулӑшса тӑмалла.

ЦК ВКП(б), СТАЛИН ЮЛТАША

Тамбов облаçӗнчи колхозниксен ырӑ та патриотизмлӑ пуçарӑвне йышӑнса, Иваново облаçӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсем танксен «Ивановский колхозник» ятлӑ колоннине тума укçа пухма шут тытрӗç. Малтанхи пилӗк кун хушшинче колхозниксемпе колхозницӑсем хӑйсен перекетлесе хӑварнӑ укçинчен 65 миллион та 187 пин тенкӗ укçа пухса пачӗç. Танксен колоннине тума укçа парас ӗç малалла пырать. Укçа пухас ӗç фронтпа тылӑн пӗрлӗхне кӑтартса паракан тата Эсир, Сталин юлташ, Октябрьти докладпа приказра лартнӑ задачӑсене пурнӑçлама, çапла вара нимӗçсен фашистла захватчикӗсене часрах тата Çара мӗн май килнӗ таран пулӑшма колхозлӑ хресченсем чунтан-чӗререн тӑрӑшнине кӑтартакан вӑйлӑ демонстраци пулса тӑчӗ.

ВКП(б) Иваново Обкомӗн Секретарӗ ПАЛЬЦЕВ.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ, СТАЛИН ЮЛТАША

Хаклӑ Иосиф Виссарионович!

Хамӑн икӗ ывӑлӑма фронта ăсатнӑ чухне эпӗ вӗсене нимӗç захватчикӗсене пӗр шеллемесӗр пӗтерсе пыма наказ патӑм, хам енчен эпӗ вӗсене тылра хамӑн вӑя шеллемесӗр ӗçленипе пулӑшса пыма сӑмах патӑм.

Эсир Саратов облаçӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсене янӑ саламлӑ телеграммӑна илтсен тата нимӗçсен фашистла бандисене часрах пӗтерсе тӑкма паттӑр Хӗрлӗ Çара пулӑшас тесе, эпӗ хамӑн перекетлесе хӑварнӑ мӗнпур укçана боевой самолетсем тунӑ çӗре пама шут тытрӑм.

Совет влаçӗ мана пуян пурӑнакан колхозник туса хучӗ. Халӗ, тӑван çӗршыв хӑрушлӑхра тӑнӑ вӑхӑтра, эпӗ ӑна мӗнпе пулӑшма пултаратӑп, çавӑнпа пулӑшма шут тытрӑм. Колхозра хам ырӑ кӑмӑлпа ӗçлесе тупнӑ пӗтӗм укçана Хӗрлӗ Çар фондне хыватӑп. Декабрӗн 15-мӗшӗнче эпӗ государство банкне 100 пин тенкӗ хывса, тӑван çӗршыва хӳтӗлекенсене парнелемешкӗн боевой самолет тума заказ патӑм. Манӑн боевой машина нимӗç захватчикӗсене çапса аркатса пытӑр, вӑл пирӗн тӑвансене — айӑпсӑр совет çыннисене мӑшкӑл тунӑ нимӗçсен пуçӗ çине вилӗм кӳрсе пытӑр. Колхозниксен хӑйсен укçипе тунӑ боевой самолетсен çӗршер эскадрильисем пирӗн Хӗрлӗ Çара, пирӗн таса çӗршыва нимӗç захватчикӗсенчен тасатма пулӑшӗç.

Саратов облаçӗнчи Ново-Покровски районри «Стахановец» колхозӑн колхозникӗ
ФЕРАПОНТ ГОЛОВАТЫЙ

Танксен хӑватлӑ колоннисене тӑвар

Тамбовецсемпе саратовецсен пуçарӑвне ӑнлантарса паман пирки

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, декабрӗн 18-мӗшӗ. («Чӑваш Коммуни» корр., телефонпа). Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума районри колхозсенче пӗтӗмпе те 275.000 тенкӗ çеç пухнӑ. Районри 96 колхозран 36-шӗнче çак ӗç валли пухнӑ укçана халӗ те государство банкне хывман. Карай ялсоветӗнчи Войков ячӗпе тӑракан колхозра (председателӗ Сидоров), Итмар ялсоветӗнчи «Первое мая» колхозра (председателӗ Малова) танксен колоннине тума пӗр пус укçа та пухман. «Çӗнӗ ял», «Чӑваш Коммуни» колхозсенче те ку ӗç сӳрӗккӗн пырать. Ӗççынни депутачӗсен райсовет исполкомӗнче ӗçлекенсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума укçа пухасси çинчен сӳтсе-явнӑранпа вӑхӑт нумай иртрӗ, анчах вӗсем ку таранччен укçине пухса банка хывман-ха.

Танксен колоннисене тума укçа пухасси сӳрӗккӗн пулса пыни ку ӗç тавра агитациллӗ-масӑллӑ ӗçе çителӗксӗр туса пынинчен килет. Тамбов тата Саратов облаçӗсенчи колхозниксен пуçарӑвӗ çинчен районри 15 колхозра çеç сӳтсе-явнӑ. Вӑл колхозсенче танксен колоннисене тума укçа пухас ӗç уйрӑмӑнах вӑйланни палӑрать. Юлашки ик-виçӗ кун хушшинче çав колхозсен членӗсем танксен колоннине тума пурӗ 515.000 тенкӗ пухма кӑмӑл турӗç. «Янмурзино» колхоз членӗсем—60.000 тенкӗ, «Красное Сормово» колхоз членӗсем—75.000 тенкӗ, «Волга», «12 лет Октября» колхозсен членӗсем—50.000-шер тенкӗ хывма пулчӗç. Районри партипе совет тата комсомол активӗ тамбовецсен тата саратовецсен пуçарӑвӗ çинчен мӗнпур колхозсенче ӑнлантарса панӑ пулсан, çак ӗç чылай хӑвӑртланнӑ пулӗччӗ.

С. ШАДИН.

Танксем тума укçа пухас ӗçе вӑйлатмалла

Сталин юлташ Тамбов облаçӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсем патне янӑ салампа хавхаланнӑ Тӑвай районӗнчи колхозниксем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 398.000 тенкӗ, танксен «Тракторист Чувашии» колоннине туса 62.000 тенкӗ укçа пухса хывнӑ.

Ку ӗçре Нӑрваш Кушкӑри «Искра Ильича», Кивӗ Пуянкассинчи «Социализм», Енӗш Нӑрвашри «Красная Чувашия», Мучарти «25 лет Октября» колхозсем малта пыраççӗ. «Искра Ильича» колхоз членӗсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 26.000 тенкӗ, «Красная Чувашия» колхоз членӗсем 50.000 тенкӗ, «Социализм» колхоз членӗсем 16.421 тенкӗ пухса хывнӑ.

Танксен колоннине тума укçа-тенкӗ пухас ӗçе кирлӗ пек организацилемен колхозсем те пур-ха. Уйрӑмӑнах Кармалти «Комсомолец», Кӗршери «Свободный труд», Лачкассинчи «Звезда» Чӳкçырминчи «Коммунар» колхозсенче укçа пухас ӗç япӑх пырать. Çавӑн пекех Вӑрманхӗрринчи «Красное Сормово», Уразлинӑри «Заря», Чутейри «Сталь», Амалӑхри «Горьковская Коммуна» колхозсенче те çак ӗçе начар организациленӗ.

Сталин юлташӑн доклачӗпе приказне ӗççыннисене анлӑн ӑнлантарса, танксен колоннисене тума укçа пухас ӗçе хӑвӑртлатмалла.

В. ЧЕРНОВ.
Тӑвай МТС политотделӗн начальникӗ.

Патриотизмлӑ пысӑк туйӑмпа

ШӐХАСАН, декабрӗн 17-мӗшӗ. (Телефонпа). Халӑхӑн укçи-тенкипе Хӗрлӗ Çар валли танксем, самолетсем тума укçа пухнӑ Тамбов тата Саратов облаçӗсенчи колхозниксен лайӑх пуçарӑвӗ çинчен пӗлсен, районри колхозсенче танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума укçа пухас ӗç хӑвӑртланчӗ.

Юлашки икӗ-виçӗ кун хушшинче районри ӗççыннисем çак ӗç валли татах 120.000 тенкӗ хыврӗç. Çапла вара паянхи кун тӗлне танксен колоннине тума пурӗ 376.000 тенкӗ пухнӑ. Ку ӗçе уйрӑмӑнах «Пионер», «Герой» колхозсенче лайӑх организациленӗ. «Пионер» колхоз членӗсем çак ӗç валли малтан пӗтӗмпе те 7.000 тенкӗ çеç пухнӑччӗ. Тамбов тата Саратов облаçӗсенчи колхозниксене Сталин юлташ тав тунӑ хыççӑн вӗсем татах 15.000 тенкӗ пухрӗç. Колхоз председателӗ Викторов, колхозник Кузьмин юлташсем 2.000-шер тенкӗ пачӗç. Çавӑн пекех «Герой» колхоз членӗсем те танксен колоннисене тума 19.000 тенкӗ яхӑн укçа пухнӑ.

С. СОКОЛОВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

400 килограмм тимӗр-тӑмӑр пухнӑ

ВӐРМАР. Хоруйӗнчи туллимар вӗтам шкулта вӗренекенсемпе пионерсем тимӗр-тӑмӑр пухас тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗçлеççӗ. Вӗсем паянхи куна 400 килограмм ытла тимӗр-тӑмӑр пухрӗç. Ку ӗçре уйрӑмах 7-мӗш класс (руководителӗ Г. Никифоров юлташ) малта пырать.

А. ИВАНОВ.

Ютçӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссариатӗнчен

Албанин никама пӑхӑнманлӑхӗ çинчен

Совет Правительстви Албани çинчен мӗнле пӑхать тесе ыйтусем панӑ май Ютçӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссариачӗ çапла ӑнлантарса парать: Совет Союзӗ, Албани патриочӗсем хӑйсен çӗршывне ирӗке кӑларассишӗн Итали оккупанчӗсене хирӗç хастарлӑн çапӑçнине пӗтӗм чӗререн кӑмӑлласа тӑрса, Итали империализмӗ Албани территорине нимӗнле хапсӑннине те йышӑнмасть, вӑл Албания фашистла захватчиксен аллинчен хӑтӑлтӑр, унӑн никама пӑхӑнманлӑхӗ çӗнӗрен пурӑçлантӑр тесе тӑрать. Совет Правительстви çакна шанса тӑрать: Албани халӑхӗ хӑйӗн никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн кӗрешни Италипе Германи оккупанчӗсем пусмӑрлакан Балкан халӑхӗсен хӑйсене ирӗке кӑларассишӗн пыракан кӗрешӗвӗпе пӗрлешӗ, Балкан халӑхӗсем ирӗке юратакан ытти çӗршывсемпе союзлӑ пулса кӗрешсе захватчиксене хӑйсен çӗрӗнчен хӑваласа кӑларӗç. Албанире малашне мӗнле государство стройӗ пуласси вӑл Албанин хӑйӗн ӗçӗ, ӑна Албани халӑхӗ хӑй татса памалла.

Пирӗн паттӑр земляк капитан П. П. Кураков комиссар пулса тӑракан рота (Калинин фрончӗ) виçӗ çапӑçура нимӗçсен 600 ытла салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ. Çапӑçура паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн Кураков юлташа Хӗрлӗ Çӑлтӑр орденӗпе наградӑланӑ. П. П. Кураков—чӑваш. Отечественнӑй вӑрçӑ пуçланиччен вӑл Çӗмӗрле хулинчи перекет кассин заведующийӗ пулса ӗçленӗ.

УКЕРЧӖК ÇИНЧЕ: П. П. Кураков юлташ.
Е. РЯПАСОВ фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Совет Информаци Бюровӗнчен

Декабрӗн 17-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Декабрӗн 17-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем Сталинград районӗнче тата Центральнӑй фронтра малтанхи еннеллех наступлениллӗ çапӑçусем туса пынӑ.

Тӗрӗсрех шутланӑ тӑрӑх, Суровикинӑран хӗвелтухӑçнерехре халӑх пурӑнакан пункта йышӑнса илнӗ чухне пирӗн войскӑсем малтан кӑтартӑ пек 305 оруди мар, тӗрлӗ калибрлӑ 580 оруди тытса илнӗ. Ӗнерхи пӗлтерӳре кӑтартнӑ трофейӑсемсӗр пуçне, Суровикинӑран хӗвеланӑçнерехре тата 15 танк, 26 танкеткӑпа бронемашина, 65 миномет, 205 станковӑй пулемет, 650 противотанковӑй пӑшал, 3.510 винтовка, 940 мотоцикл, 140 автомотор, 2.500 снаряд, 570 ещӗк винтовка патронӗсем, 25 ещӗк пысӑк калибрлӑ пулемет патронӗсем, 160 ещӗк противотанковӑй пӑшал патронӗсем, 200 ещӗк мина, 143 ещӗк ручной гранатӑсем, 10 пин бензин бакӗ, 7 вагон медицина хатӗрӗсем, 3 продовольстви склачӗ тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ.

Декабрӗн 16-мӗшӗнче Сталинград районӗнче противникӑн 7 транспортнӑй самолетне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Декабрӗн 16-мӗшӗнче пирӗн авиацичасӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗçсен 15 танкне тата войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине çити пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, горючи тултарнӑ 20 автоцистернӑна çунтарса янӑ, артиллерин 10 батарейине пусарса лартнӑ, 2 поезда çӗмӗрнӗ, противникӑн пехотине икӗ рота таран салаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн войскӑсем противникпа хире-хирӗç персе тӑнӑ. Хулан çурçӗр-хӗвеланӑç хӗрринче пирӗн боецсен пӗр ушкӑнӗ противникӑн тылне кӗрсе кайнӑ та тӑшманӑн колонни çине пенӗ. 50 гитлеровеца çити вӗлернӗ. Хулан кӑнтӑр хӗрринче пирӗн артиллери нимӗçсен артиллери батарейине пӗтерсе тӑкнӑ тата тӑшманӑн пехотине пӗр рота таран вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Сталинградран çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн войскӑсем хӑйсен рубежӗсене çирӗплетнӗ тата противник çине персе тӑнӑ. Н-ски часть 350 гитлеровеца çити вӗлернӗ, нимӗçсен 3 танкне, 10 пулеметне, пӗр орудине пӗтерсе тӑкнӑ тата 7 блиндажне ишӗлтернӗ. Тепӗр участокра нимӗçсен пӗр роти пирӗн подразделенин тылне сӑрхӑнса кӗрсе кайма хӑтланнӑ. Пирӗннисем гитлеровецсене харӑссӑн персе тӑрса каялла чакарнӑ, çапӑçу хирӗнче гитлеровецсен вуншар вилли выртса юлнӑ.

* * *

Сталинградран кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн войскӑсен пӗр пайӗ наступлениллӗ çапӑçусем туса пынӑ. Совет танкисчӗсем Суровикинӑран кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре тӑшманӑн 1.235 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ, 5 танкне персе çӗмӗрнӗ, 30 орудине, грузсем тиенӗ 12 лавне пӗтерсе тӑкнӑ, 52 блиндажне ишӗлтернӗ тата 70 гитлеровеца тыткӑна илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн боецсем нимӗçсен мотопехотин 30 танк пулӑшса пынипе тунӑ атакине сирсе янӑ. Çапӑçура противникӑн 7 танкне персе çӗмӗрнӗ, 14 автомашинине çунтарса янӑ.

* * *

Центральнӑй фронтра пирӗн войскӑсем наступлениллӗ çапӑçусем туса пынӑ, уйрӑм участоксенче противникӑн контратакисене сирсе тӑнӑ. Ржевран хӗвеланӑçнерехри районра Верехин юлташ командир пулса тӑракан чаçӑн боецӗсем противникӑн оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ узелне аркатса тӑкнӑ.

Великие Луки районӗнче Панченко юлташ ертсе пыракан подразделенисем, противникӑн контратакисене сирсе тӑрса, икӗ кун хушшинче нимӗç пехотине пӗр батальон таран пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Туапсерен çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре пирӗн подразделенисем тӑшманӑн темиçе блиндажне тытса илнӗ тата гитлеровецсене пӗр рота таран пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн зенитнӑй артиллери нимӗçсен 2 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Украинӑри партизансен отрячӗ пӗр район центрӗнче вырӑнаçнӑ нимӗç гарнизонне тапӑннӑ. Совет патриочӗсем тӑшманӑн 500 салтакӗпе офицерне çити вӗлернӗ, 2 бронемашинине пӗтерсе тӑкнӑ, çыхӑну узелне тата электростанцине çӗмӗрнӗ, 2 кӗпере тата 7 çурта сирпӗнтерсе янӑ, çав çуртсенче нимӗçсен учрежденийӗсем ӗçленӗ пулнӑ. Партизансем пӗр оруди, 4 пулемет, 13 автомат, 150 винтовка, 18 револьвер, 2 мотоцикл, 50 велосипед, 2 радиостанци, тата продовольствипе тумтирсен складне тытса илнӗ.

* * *

Нимӗçсен фашистла ирсӗрӗсем Совет Латвийӗнчи хуласемпе ялсенчи çынсене çаратаççӗ. Гитлеровецсем Латвие оккупациленӗ хыççӑн малтанхи кунсенчех çуртсене кӗрс-кӗре кайса куçайми пурлӑхне пурне те—продовольствие, тумтирсене, хаклӑ япаласене иле-иле тухнӑ. Халӗ нимӗç захватчикӗсем натурӑпа тата укçапа тӳлемелли питех те пысӑк, тӳлеме вӑй çитермелле мар

(Вӗçӗ 2-мӗш страницӑра).

Совет Информаци Бюровӗнчен

Декабрӗн 17-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӗвӗн вӗҫӗ

налогсем хунӑ. Нимӗҫсем ҫӗнӗ тӗштырра пӗтӗмпех илсе каяҫҫӗ, хресченсене 11-шер килограмм ҫеҫ хӑвараҫҫӗ. Йӗтӗнпе ытти техникӑлла культурӑсене пӗтӗмпех нимӗҫсене памалла туса хунӑ. Вӗсем Латви хресченӗсене тустарса, вӗлерсе пӗтерес шутпа ҫапла усӑпах ҫаратаҫҫӗ. Нумай ялсенче халех те ӗнтӗ нуша калама ҫук пысӑк. Вуншар ҫын выҫӑпа тата тӑраниччен ҫиеймен пирки сарӑлакан чирсемпе чирлесе вилеҫҫӗ.

Декабрӗн 18-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Декабрӗн 18-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Сталинград районӗнче тата Центральнӑй фронтра пирӗн войскӑсем малтанхи еннеллех наступлениллӗ ҫапӑҫусем туса пынӑ.

* * *

Сталинградӑн заводсем вырнаҫнӑ районӗнче пирӗн штурмовой отрядсем нимӗҫсен 7 дзотне вӗсен гарнизонӗсемпе пӗрлех ҫавӑрса илнӗ те сирпӗнтерсе янӑ. Хулан кӑнтӑр хӗрринче ҫӗр ҫинчи войскӑсем противникӑн 5 транспортнӑй самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн чаҫсем вӑйлӑн персе ҫапӑҫусем туса пынӑ тата противникӑн темиҫе контратакине сирсе янӑ. Нимӗҫсен пехоти тата танкӗсем Н-ски часть хӳтӗлекен позицисене атакӑланӑ. Противотанковӑй орудисенчен персе нимӗҫсен 5 танкне ҫӗмӗрнӗ. Кун хыҫҫӑн пирӗн боецсем противника хирӗҫ пырса ҫапнӑ та нимӗҫсен 200 ытла салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра пирӗн подразделенисем гитлеровецсен пӗр ротине ҫити, 8 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ тата боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Сталинградран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсен пӗр пайӗ наступлениллӗ ҫапӑҫусем туса пынӑ. Н-ски часть нимӗҫсен тӗреклетнӗ пунктне тытса илнӗ. Тепӗр участокра совет боецӗсем гитлеровецсен 2 контратакине сирсе янӑ. Тӑшманӑн 250 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ, нимӗҫсен 8 танкне ҫунтарса янӑ е ҫӗмӗрнӗ, 12 пулемет, винтовкӑсемпе боеприпассем нумай тытса илнӗ.

* * *

Центральнӑй фронтра пирӗн войскӑсем активлӑ ҫапӑҫусем туса пынӑ. Ржевран хӗвеланӑҫнерехри районра противник контратакӑсем туса совет войскисене малалла куҫса пымашкӑн чарма хӑтланса пӑхнӑ. Н-ски чаҫӑн боецӗсем нимӗҫсене сирсе янӑ, тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсене пӗр рота ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

Ржев—Вязьма чугунҫулӗн районӗнче пирӗн штурмовой отряд халӑх пурӑнакан пункта йышӑннӑ, ҫав пункта нимӗҫсем оборонӑн тӗреклетнӗ пункчӗ туса хунӑ пулнӑ. Халӑх пурӑнакан ҫак пунктшӑн пынӑ ҫапӑҫусенче противникӑн пехотине пӗр батальона ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫавӑн пекех тата 3 танк, 2 оруди, 10 пулемет пӗтерсе тӑкнӑ. Тыткӑна илнисем пур. Ҫапӑҫу хирӗ тӗлӗнче пирӗн зенитчиксем нимӗҫсен виҫӗ самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Ленинград облаҫӗн пӗр районӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗ халӑх пурӑнакан пунктри нимӗҫсен гарнизонӗ ҫине тапӑннӑ. Партизансем ҫак ялта пулнӑ гитлеровецсене вӗлерсе пӗтернӗ. Совет патриочӗсен ҫак отрядӗ пӗр ушкӑнӗ противникӑн ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Паровоз тата 13 вагон ҫӗмӗрӗлнӗ. Крушени вӑхӑтӗнче горючи тултарнӑ 6 цистерна ҫунса кайнӑ.

* * *

Нимӗҫсем Майкопра нефть кӑларас ӗҫе организациленӗ тата Украинӑра трактор заводне ӗҫе янӑ тесе Берлинра юмах янисене Совет Информаци Бюровӗ тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑччӗ ӗнтӗ. Майкоп нефчӗ те, Украинӑри тракторсем те гитлеровецсен чирлӗ пуҫӗнче кӑна пуррине питех те уҫҫӑн кӑтартса панӑччӗ. Анчах та фашистла суеҫӗсем лӑпланма пӗлмеҫҫӗ. Ахальтен мар халӑх сӑмахӗнче ҫапла каланӑ: «Выҫӑ карчӑк ҫӑкӑр ҫинчен ҫеҫ шухӑшлать», тенӗ. Декабрӗн 16-мӗшӗнче Берлинри радио тӗлӗнтерсе яракан тепӗр ҫӗнӗ хыпар пӗлтернӗ. Гитлерла жуликсем пӗтӗм тӗнче умӗнче ҫапла мухтанаҫҫӗ: «Новороссийскра цемент тӑвакан пысӑк заводсем пур. Вӗсем пӗтӗм Российӑра тунӑ цементӑн 30 процентне парса тӑнӑ. Хальхи вӑхӑтра ҫак заводсем ӑнӑҫлӑн ӗҫлеҫҫӗ тата ҫителӗклӗ чухлех продукци параҫҫӗ». Ҫак пӗлтерӳри хыпарсене пурне те, малтанхисем пекех, йӑлтах шухӑшласа кӑларнӑ. Пӗррӗмӗшӗнчен, Новороссийскри цемент тӑвакан заводсен пӗтӗм ушкӑнӗ Совет Союзӗнче туса кӑларнӑ пӗтӗм цементӑн 30 процентне мар, 10 процентран та сахалтарах туса кӑларнӑ. Иккӗмӗшӗнчен, нимӗҫсем Новороссийскри цемент тӑвакан заводсен пӗтӗм ушкӑнне мар, вӗсенчен иккӗшне ҫеҫ тытса илнӗ, ҫак икӗ завод та пирӗн артиллерин вутҫулӑмӗ айӗнче тӑраҫҫӗ. Ҫак икӗ предприяти цементӑн 3—4 процентӗнчен ытла мар туса кӑларнӑ. Виҫҫӗмӗшӗнчен, ҫав заводсен тӗп оборудованине вӑхӑтра турттарса тухнӑ. Ҫапла вара, нимӗҫсем Новороссийскра нимӗнле цемент та тумаҫҫӗ тата тума та пултараймаҫҫӗ. Ыйту тухса тӑрать: мӗншӗн-ха гитлеровецсем ҫапла виҫене пӗлмесӗр суяҫҫӗ, мӗншӗн-ха вӗсем советӑн оккупациленӗ районӗсенче хӑйсем экономикӑллӑ ҫитӗнӳсем тунӑ тесе ухмахла та кулӑшла суя сӑмахсене ҫине тӑрсах сараҫҫӗ? Ҫакна ҫӑмӑллӑнах ӑнлантарса пама пулать. Германия экономика тӗлӗшпе питех те пысӑк йывӑрлӑхсем тӳссе ирттерет. Совет заводӗсемпе промыслисене ӗҫе янӑ тесе суя сӑмахсем сарса, гитлеровецсем ҫӑмӑллӑн ӗненекен ҫынсене Германия хуҫалӑхри кризиса пӗтерчӗ тата хӑйӗн ӗҫне юсарӗ тесе ӗнентерме хӑтланаҫҫӗ. Анчах ҫавӑн пек ҫӑмӑл ӗненекен ҫынсем сахалланнӑҫемӗн сахалланса параҫҫӗ. Халӗ ӗнтӗ пӗтӗм тӗнчери общественность гитлеровецсен суя мелӗсене ытла та лайӑх пӗлсе тӑрать.

Нимӗҫсем совет войскисене ҫавӑрса илнӗ тесе суйса пӗлтерни

Гитлеровецсен ставки ҫакӑн пек пӗлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ: нимӗҫ войскисем Торопец хули патӗнче совет войскисен группине ҫавӑрса илсе пӗтерсе тӑкнӑ пулать. Ҫав пӗлтерӳре ҫапла каланӑ: «Торопец районӗнче совет войскисен 16 пин ҫын вилнӗ, 4217 ҫын тыткӑна лекнӗ, 542 танкпа разведка тӑвакан бронемашинӑсем, ҫӑмӑл тата йывӑр орудисем нумай, 1000 грузовик ытла тата тӗрлӗ ҫар материалӗсем пӗтнӗ», тенӗ. Ҫав пӗлтерӳре тӗрӗсси пӗр сӑмах та ҫук. Суя сӑмах купалас тӗлӗшпе унта гитлеровецсем хӑйсенчен те ирттерсе янӑ. Торопец патӗнче ҫавӑрса илнӗ тесе мӗне калаҫҫӗ-ха ҫав аташса кайнӑ, ялан суйнипе ӑнран кайнӑ гитлеровецсем? Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫсен фашистла войскисене 1941—1942 ҫулхи хӗллех Торопец патӗнчен хӗвеланӑҫнелле 70 километр ытла, кӑнтӑрпа кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнелле 100 километр ытла хӑваласа янӑччӗ. Ҫав хулана халӗ советсен тылра тӑракан хули тесе шутлама пулать, унта халӗ йывӑр орудисем харӑссӑн персе тӑни те илтӗнмест. Торопец патӗнче хальхи вӑхӑтра нимӗҫсем тӑраҫҫӗ пулсан, вӗсем унта тыткӑна лекнине пула ҫеҫ тӑраҫҫӗ.

Чӑннипе илсен, юлашки вӑхӑтра ҫапӑҫусем Торопец районӗнче мар, Белый хули районӗнче пынӑ тата унта нимӗҫсем мар, совет войскисем тапӑнса пынӑ. Ҫав ҫапӑҫусенче пирӗн чаҫсем нимӗҫсен 33-мӗш танковӑй полкне штабӗпе пӗрлех, 216-мӗш пехотнӑй полкне тата 13-мӗш егерски батальонне пӗтӗмпех аркатса тӑкнӑ. Ҫав ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 7 пин салтакпа офицер ытла вилнӗ. 110 танк, 57 оруди таран, 100 пулемет таран, 860 автомашина, 10 лав пӗтнӗ. Пирӗн чаҫсем боеприпассен 6 складне, горючин 3 складне сирпӗнтерсе янӑ тата пӗр аэродромра противникӑн 17 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ.

Ҫав ҫапӑҫусенче пирӗн войскӑсен 2.000 ҫын вилнӗ, 115 ҫын пӗр хыпарсӑр ҫухалнӑ; 70 танк, 48 оруди 360 автомашина пӗтнӗ.

Белый хули районӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусен чӑн итогӗсем ҫавӑн пек ӗнтӗ.

Нимӗҫсем тата тепӗр суя пӗлтерӳ пичетлесе кӑларни вӑл питӗ кӑтартуллӑ япала. Вӑл ҫакӑн ҫинчен калать: гитлеровецсен ӗҫӗсем куллен начарланса пыраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ вӗсем, халӑх каларӗшле, хӑйсен айӑпне ҫын ҫине яраҫҫӗ. Нимӗҫ командованийӗ нимӗҫсене Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронтра ӗҫсем мӗнле пыни ҫинчен тӗрӗссине калама хӑрать. Ан калатӑр. Тӗрӗссине ҫак пӗлтерӗве пичетлесе кӑларсан Совет Информаци Бюровӗ каласа парать.

СОВИНФОРМБЮРО.

Кольцовка колхозникӗсен примерӗпе

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, декабрӗн 17-мӗшӗ. (Телефонпа). Машинно-тракторнӑй станци ҫитес ҫул тумалли ӗҫсемшӗн аванс шучӗпе натуроплата тӳлес тӗлӗшпе Кольцовкӑри Сталин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем пуҫарнӑ примера «Янмурзино», «Красное Сормово», «Сила» тата «17 лет Октября» колхозсем йышӑнса илчӗҫ.

Упи ялсоветӗнчи «Янмурзино» колхоз аванс шучӗпе 150 центнер натуроплата тӳлеме пулчӗ, ӗнерхи кун тӗлне вӑл хатӗрлев пунктне 80 центнер леҫрӗ. Ҫавӑн пекех «Красное Сормово» колхоз та ҫитес ҫулшӑн 100 центнер натуроплата тӳлерӗ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Ҫуракине хатӗрленер

Республикӑри МТС-сенче тракторсене юсас ӗҫ декабрӗн 15-мӗшӗ тӗлне мӗнле пынине кӑтартакан

СВОДКА

(Процентпа)

МТС-сем	Капитальнӑй ремонт	Текущи ремонт	Тракторсене юсас плана пурнӑҫланӑ
Шӑхасан	33,3	175,0	114,2
Елчӗк	114,2	106,2	108,6
Куславкка	100,0	100,0	100,0
Элӗк	116,6	72,7	88,2
Вӑрмар	50,0	100,0	81,8
Ишлей	100,0	66,6	80,0
Канаш	50,0	100,0	76,9
Шупашкар	40,0	90,9	75,0
Тӑвай	50,0	81,8	70,5
Йӗпреҫ	50,0	77,7	66,8
Первомайски	100,0	57,1	66,6
Чкаловски	50,0	71,4	65,0
Комсомольски	50,0	57,1	54,5
Пӑрачкав	11,0	75,0	52,0
Кувакино	50,0	46,6	48,0
Ҫӗмӗрле	50,0	42,8	44,4
Красноармейски	71,4	27,2	44,4
Етӗрне	25,0	50,0	42,8
Ҫӗрпӳ	25,0	53,8	42,8
Сӗнтӗр	20,0	50,0	41,1
Хӗрлӗ Чутай	100,0	—	40,0
Вӑрнар	60,0	72,7	34,7
Шӑмӑршӑ	—	57,1	33,3
Сӗнтӗрвӑрри	—	40,0	25,0
Улатӑр	14,2	18,1	16,6
ЧАССР тӑрӑх	52,6	68,5	62,8
Декабрӗн 10-мӗшӗ тӗлне пулнӑ	47,3	64,4	58,2

26 трактор юсанӑ

ШӐХАСАН. Машинно-тракторнӑй станцин мастерскойӗнче кулленех хӗрӳ ӗҫ пырать. Тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене юсас тӗлӗшпе бригадӑпа бригада ӑмӑртса ӗҫлет. Халӗ ӑмӑртура 1-мӗш, 6-мӗш тата 7-мӗш бригадӑсем малта пыраҫҫӗ. 7-мӗш номерлӗ бригада хальхи вӑхӑта 3 плуг, 2 культиватор, пӗр сеялка, 4 трактортан 3-шне юсанӑ. 6-мӗш номерлӗ бригада та 2 трактор, 4 плуг, 4 культиватор тата пӗр сеялка юсанӑ. Тракторсене юсас ӗҫре Н. Григорьев, Герасимов, Платонов тата Абакумов юлташсем тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

Хальхи вӑхӑта Шӑхасан МТС-ӗ пурӗ 26 трактор юсанӑ. Анчах тракторсене юсас ӗҫ пур бригадӑсенче те ҫителӗклӗ пымасть-ха. 4-мӗшпе 9-мӗш номерлӗ бригадӑсем ку таринччен икшер трактор ҫеҫ юсанӑ.

В. ЯКОВЛЕВ.

Вӑрлӑхсем уйӑрса хураҫҫӗ

ШӐХАСАН. Ухманти «Победа» колхоз килес ҫураки валли вӑрлӑхсем уйӑрса хурать. Тӗштырӑсен, пӑрҫа йышши тырӑсен тата ҫӗрулмин вӑрлӑхӗсене ҫителӗклех уйӑрса хунӑ. Кунта страховой фонда та пӗтӗмпех хывса хӑварнӑ.

Троицкӑри «Свет» колхоз та вӑрлӑх фончӗсене хывма тытӑннӑ. Анчах унта ку ӗҫе ҫурри чухлӗ те туман-ха. Ҫавӑн пекех ытти колхозсенче те вӑрлӑхсене уйӑрса хӑварас тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Удобренисем хатӗрлеҫҫӗ

СӖНТӖРВӐРРИ. Шуркассинчи Киров ячӗпе тӑракан колхоз ҫитес ҫулхи ҫуракине хатӗрленме тытӑнчӗ. Ку таринччен колхоз уя 100 лав тислӗк кӑларнӑ. Халӗ колхозниксем ҫӗре ҫемҫетмелли япаласене пухас тӗлӗшпе ӗҫлеҫҫӗ. Шкул ачисем пулӑшнипе 10 центнер кӗл, 12 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухнӑ. Ҫав вӑхӑтрах колхозра вӑрлӑхсене сортлас ӗҫ пырать.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

Ҫӗрне-кунне пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Нӗркечри Шмидт ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем, пирӗн войскӑсем Сталинград патӗнче тата Центральнӑй фронтра хӗрӳллӗн ҫапӑҫни ҫине ответлесе, авӑн ҫапнӑ ҫӗрте ҫӗрне-кунне пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ. Колхозниксем авӑна хӑвӑртрах ҫапса пӗтерес тесе каҫхи сменӑпа ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Хӗрачасем Лидия Бабаевӑпа Евгения Михайлова юлташсем, кӑнтӑрла фермӑра ӗҫленине пӑхмасӑрах, каҫхине авӑн ҫапма тухаҫҫӗ. Ҫавӑн пекех авӑн ҫапас ӗҫе налог агенчӗ Г. Демьянкова, акушерка А. Никонова, учетчица М. Волкова юлташсем те активлӑн хутшӑнаҫҫӗ.

Хӗрарӑмсем — колхозра пысӑк вӑй. Вӗсенчен чылайӗшсем колхозра ертсе пырас ӗҫре ӗҫлеҫҫӗ. М. Кудрявцева юлташ ертсе пыракан бригада авӑна пуринчен малтан ҫапса пӗтерчӗ. К. Шашкова юлташӑн бригади те авӑн ҫапас ӗҫре тӑрӑшса ӗҫлет.

Н. ВИНОГРАДОВ.

Чугунҫула лайӑх пулӑшса тӑраҫҫӗ

ВӐРНАР, декабрӗн 15-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри партипе совет организацийӗсем, колхозсемпе учреждениссем хӑйсен ҫывӑхӗнчи чугунҫулпа унӑн станцине пулӑшсах тӑраҫҫӗ. ВКП(б) райкомӗн бюровӗ йышӑннӑ тӑрӑх, чугунҫул ҫинче ӗҫлеме кирлӗ ҫынсемпе лавсене колхозсем пӗрмаях парса тӑраҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра чугунҫул ҫинче 10 лав пӗр татӑлмасӑр ӗҫлет. Паровозсем ҫине вутӑ тиенӗ чух станцине 60 ҫын тухса ӗҫлерӗҫ. Ҫак хӗлӗн малтанхи ҫил-тӑманӗ вӑхӑтӗнче линисене юртан тасатас тӗлӗшпе икӗ воскресник туса ирттерчӗҫ. Воскресниксене район центрӗнчи служащисемпе пӗрлех колхозниксем те хутшӑнчӗҫ.

Ӗҫҫыннисем чугунҫулшӑн тӑрӑшни пире, железнодорожниксене, татах та тимлӗн ӗҫлеме хавхалантарать.

И. ВОРОБЬЕВ,
Вӑрнар станцинчи парторганизаци секретарӗ.

Пирӗн землякcем

Ҫапӑҫури туслӑх

Вырӑссемпе, казахсемпе, украинецсемпе тата ытти халӑхсен ывӑлӗсемпе пӗрле чӑваш халӑхӗн ывӑлӗсем те совет ҫӗрне тӑшманран хӳтӗленӗ ҫӗрте паттӑррӑн ҫапӑҫаҫҫӗ. Дон шывне хӳтӗлесе, вӗсем ҫавӑнпа пӗрлех аннемӗр-Атӑла, Чӑваш ҫӗршывне сыхлаҫҫӗ.

Старши сержант Павел Ильиных Канаш хулинчен. Пӗр боевой задание пурнӑҫланӑ чухне ӑна нимӗҫсем хупӑрласа илнӗ. Хӑйпе пӗрле автомат тата икӗ граната ҫеҫ пулнӑ пулин те, вӑл тӑшмана хирӗҫ танмар ҫапӑҫӑва кӗнӗ. Нимӗҫсем советӑн пӗччен воинӗ патне ҫывхарса пынӑ. Ильиных аманнӑ, анчах вӑл фашистсене малтанхи пекех хӑйӗн автоматӗнчен персе вӗлерсе тӑнӑ. Герой хӑй патне ҫывхарса ҫитнӗ нимӗҫсене гранатӑпа аркатнӑ.

Тӑшманӑн унки хӗсӗннӗҫемӗн-хӗсӗнсе пынӑ. Фашистсем пирӗн боеца чӗррӗн тытма шутланӑ. Ҫак вӑхӑтра Ильиных юлташ пӗтӗм пӗвӗпе ура ҫине сӗкленнӗ те юлашки гранатӑна нимӗҫсем ҫине вӑркӑнтарнӑ. Тӗтӗм сирӗлсен, унӑн йӗри-тавра гитлеровецсен виллисем выртнине куртӑмӑр. Вӗсенчен иҫех мар Ильиных юлташ хӑй те выртать.

Хӑюллӑ та паттӑр ӗҫсем тунипе палӑрса тӑрать красноармеец-разведчик Василий Антонов. Вӑл ҫара киличчен Элӗк районӗнче учитель пулса ӗҫленӗ. Антонов юлташ вуншар нимӗҫе вӗлернӗ ӗнтӗ. Пӗррехинче, фашистсен бомбардировщикӗ ҫапӑҫма хатӗрленсе выртнӑ боецсем тӗлӗнче вӗҫнӗ. Василий Антонов, меллӗнрех выртса, бомбардировщик ҫинелле тӑватӑ хутчен пенӗ. Фашистсен ҫӑханне вут хыпса илнӗ, вӑл ҫӗре ӳкнӗ.

Ҫара киличчен ВКП(б) Чкаловски райкомӗнче ӗҫленӗ Андрей Гаврилов — пирӗн те хӑюллӑ командир. Нимӗҫсе... Дон патнелле тапаҫланнӑ чухне, Гаврилов юлташ ертсе пыракан совет воинӗсен роти пӗр участокра питех те вирлӗн ҫапӑҫнӑ. Ҫапӑҫури боевой ӗҫсемшӗн, тӑшмана аркатнӑ ҫӗрте ҫирӗп тӑнӑшӑн ҫак ротӑри боецсене «вилӗме ҫӗнтерекенсем» тесе ят панӑ.

«Вилӗме ҫӗнтерекенсен» роти пӗр кун хушшинче ӳсӗр фрицсен тӑватӑ атакине сирсе пӑрахнӑ, хӑй наступление куҫнӑ. Ҫав ҫапӑҫусенче командир Андрей Гаврилов боецсене хӑйӗн примерӗпе хавхалантарса пынӑ.

Хӑюллисен умне вилӗм тухса тӑнӑ. Каялла чакма юрамасть. Пӗр май ҫеҫ пур—вутран малалла шӑтарса тухмалла, нимӗҫсем патне ҫитмелле, вӗсене рубежсенчен хӗсӗсе кӑлармалла, вара хӑйсен ҫав рубежсенче ҫирӗпленмелле. Анчах ҫакна тума малтан тӑшманӑн вут сапакан йӑвине пӗтермелле. Чӑваш халӑхӗн мухтавлӑ ывӑлӗ Гаврилов боецсене ҫапла тума хушнӑ та ӗнтӗ. Ҫамрӑк боец вырӑс Геннадий Вавилов фашистсен блиндажӗ патне шуса ҫитнӗ, тӑшманӑн пулемет йӑвине сирпӗнтерсе янӑ. Вавилов хыҫҫӑн украинец кӗҫӗн лейтенант Бовкун иккӗмӗш блиндаж ҫине тапса сикнӗ, унти фашистсене гранатӑсемпе пӗтерсе тӑкнӑ. Советӑн икӗ воинӗ ҫакӑнта хӑйсен пуҫӗсене тӑван ҫӗршывшӑн хурса, пӗтӗм ротӑна сыхласа хӑварнӑ. Ывӑр аманнӑ Гаврилов хӑйӗн боецӗсене ҫӗнтерӳ патне илсе ҫитернӗ.

Совет ҫӗршывӗнче ҫуралнӑ тата кӗрешӳре ҫирӗпленнӗ туслӑхра—пирӗн вӑй. Ӑна ҫӗмӗрме май ҫук, тӑшман ӑна аркатса тӑкаймӗ.

Лейтенант **Я. УХСАЙ.**
Красноармеец **И. АНТОНОВ.**

Ют ҫӗршывсенче

Францин Тулонри флотне путарни ҫинчен курнӑ ҫын каласа пани

ЛОНДОН, декабрӗн 17-мӗшӗ. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаҫат Францин «Вокленн» ятлӑ миноносецӗн ҫамрӑк морякӗ Францин Тулонри флотне путарни ҫинчен каласа панине пичетлесе кӑларнӑ. Моряк ҫапла каланӑ: Ҫурҫӗр Африкӑра Америка войскисене антарса хӑварни Тулонри ҫар карапӗсен экипажӗсенче пысӑк хумхану ҫӗклерӗ. Матроссенчен хӑшпӗрисем ҫийӗнчех Алжира каясшӑн пулчӗҫ, анчах офицерсем ҫынсене пухрӗҫ те флотӑн руководителӗсене шанса тӑма хушрӗҫ. Францин малтан оккупацилемен пайне нимӗҫсем оккупацилени Франци морякӗсем хушшинчи хумханӑва татах вӑйлатрӗ, вара моряксем, эскадрӑна нимӗҫсем тытса ан илччӗр тесе, тинӗсе кӑларма уҫҫӑнах ыйтма пуҫларӗҫ. Офицерсем ҫакӑнпа килӗшрӗҫ те Алжира е Алжирти мӗнле те пулин урӑх порта кайма шут тытрӗҫ. Дарлан флота Алжира илсе кайма панӑ приказа пысӑк ҫухатусемсӗрех пурнӑҫа кӗртме май пулнӑ. Анчах де Лаборт адмирал эскадрӑна кӑларассине хирӗҫ пулчӗ, вӑл Дарлана приказсем пама полномочи паман, терӗ. Ҫапах та моряксем нумайӗшӗ Англири радио саракан компанисе итлетчӗҫ. Хумхану кунран кунах вӑйланса пычӗ.

Ноябрӗн 27-мӗшӗнче карапсене путармалли ҫинчен приказ илтӗмӗр. Темиҫе минута иртсенех гаваньре тата пристань патӗнче тӑракан мӗнпур карапсен экипажӗсем приказа пурнӑҫа кӗртме тытӑнчӗҫ. Экипажсем карапсем ҫинчен тухса кайма ӗлкӗрчӗҫ кӑна, вара пур ҫӗрте те вӑйлӑ взрывсем илтӗнме пуҫларӗҫ. Франци карапӗсене тытса илме хатӗрленнӗ Германин 10 пин морякӗсем ҫыранра флота путарнине ним тума аптӑраса сӑнаса тӑчӗҫ. Вӗсенчен хӑшпӗрисем карапсем ҫине кӗме хӑтланса пӑхрӗҫ, анчах французсем ҫав хӑтланусене сирсе ячӗҫ. Франци карапӗсем ҫине Германин пӗр салтакӗ те кӗрсе кайма пултараймарӗ. Нимӗҫсем 20—40 ҫынран тӑракан ушкӑнсемпе тапӑнчӗҫ, анчах вӗсене пурне те пекех ручной гранатӑсем ывӑтса тата пулеметсемпе винтовкӑсенчен персе пӗтерсе тӑкнӑ. Французсен те ҫухатусем пулчӗҫ, мӗншӗн тесен нимӗҫсем ҫыран патне пыма хӑтланакан пур моряксене те пулеметсенчен печӗҫ. Пӗтӗм порт, рейд тата доксем хура тӗтӗмпе хупӑрланса тӑчӗҫ. Нефтьле витӗннӗ шывран карапсен башнисемпе полубисем курӑнатчӗҫ. «Ҫакӑн ҫине пӑхма питӗ йывӑрччӗ,—тесе каласа парать Франци морякӗ,—вӑл чӗрене ыраттаратчӗ. Анчах апла пулин те, нимӗҫсем флота тытса илме пултарайманнине курса, карапсен экипажӗсем савӑнатчӗҫ. Путарнӑ карапсем тарӑн мар вырӑнта тӑраҫҫӗ пулин те, вӗсене ҫӗклеме йывӑр пулать тесе шутлатӑп эпӗ, мӗншӗн тесен вӗсене пӗрин ҫине теприне путарнӑ».

ФРАНЦИ ФЛОЧӖ СОЮЗНИКСЕМПЕ ПӖРЛЕШНИ

ЛОНДОН, декабрӗн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Дарлан ҫапла каланӑ: Францин Дакарта, Александрийӑра тата Ҫурҫӗр Африкӑри портсенче тӑракан флочӗ Англипе Америка вӑйӗсем ҫумне пӗрлешӗ, тӗнӗл держависене хирӗҫ кӗрешӗ, тенӗ.

Дарлан Францин национальнӑй комитетне мӗнле те пулин власть представителӗ тесе йышӑнать-и, тесе ыйтни ҫине Дарлан ҫапла ответ панӑ: «Ҫак тӗлӗшпе халӗ эпӗ нимӗн те калама пултараймастӑп. Ҫапах та эпӗ тӗнӗл держависене хирӗҫ кӗрешме пултаракан пур французсем те таччӑн пӗрлешсе кӗрешчӗр тесе чунтан тӑрӑшатӑп», тенӗ.

БУАССОНПА БАРРО ГЕНЕРАЛСЕНЕ ЛАВАЛЬ «ФРАНЦИРИ ГРАЖДАНЛА ПРАВАСЕМСӖР» ТӐРАТСА ХӐВАРНӐ

ЖЕНЕВА, декабрӗн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Францин Хӗвеланӑҫ Африкинчи генерал-губернатора Буассона тата Францин Хӗвеланӑҫ Африкӑри войскисен главнокомандующине Барро генерала Францири гражданла правӑсемсӗр тӑратса хӑварни ҫинчен тата вӗсен пурлӑхне конфискацилени ҫинчен Вишире официальнӑй йӗркепе пӗлтернӗ. «Буассон тата Барро генерал,—тесе кӑтартса панӑ Виши «правительствин» декретӗнче,—хӑйсене шанса панӑ территорие Франциран уйӑрса янӑшӑн ответ тытаҫҫӗ».

ДАРЛАН ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, декабрӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Дарлан, союзлӑ державӑсен корреспондентчӗсем умӗнче сӑмахпа тухса, ҫапла каланӑ: Франци халӑхне ирӗке кӑларсан, вӑл хӑйӗн правительстви тата хӑйӗн нациллӗ политики мӗнле пуласси ҫинчен хӑй ирӗкӗпе хӑех татса парӗ, тенӗ. Хӑйӗн ҫинчен Дарлан ҫапла каланӑ: «Манӑн пӗртен-пӗр тӗллев—Франци Африкине ҫӑлса хӑварасси тата Францие ирӗке тухма пулӑшасси пулса тӑрать», тенӗ. Дарлан нимӗҫсем ӑна вӑйпах ирӗксӗрлесе хӑйсемпе пӗрле ӗҫлеттерни ҫинчен ҫирӗплетсе каланӑ. Ҫурҫӗр Африка,—тенӗ Дарлан,—тӗнӗл держависене ҫӗнтерес ӗҫе союзниксемпе пӗрле хӑйӗн мӗнпур вӑйӗсене хурӗ.

Дарлан гражданла халӑх представителӗсенчен ертсе пыракан орган организацилесси ҫинчен пӗлтернӗ. Ҫав орган государство ӗҫӗсене туса пынӑ ҫӗрте Дарланпа пӗрле ӗҫлеме тытӑнать. Расӑсем ҫинчен калакан закон тӑрӑх правӑсӑр тӑратса хӑварнӑ ҫынсене пурне те правӑсем парас ӗҫе тата союзниксем ҫине кӑмӑлласа пӑхнӑ пирки инкек тӳснӗ ҫынсене пурне те вӗҫне ҫитиччен амнисти парас ӗҫе тытӑннӑ та ӗнтӗ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ФРАНЦИРЕН ҪӖНӖ ЧУРАСЕМ ЫЙТАҪҪӖ

ЖЕНЕВА, декабрӗн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Франциpен нимӗҫ предприятийӗсене 400.000 рабочи яма хушса гитлеровецсем Лавале ҫӗнӗ требовани панӑ. Ҫак ӗҫе ҫӑмӑллатас тесе Франци ӗҫсӗрлӗхе вӑйлатма хушнӑ. «Ҫамрӑксен ӗҫ армийӗ» текен организацие хупнӑ, вӗсенче пулнӑ вуншар пин ҫамрӑк французсем урама тӑрса юлнӑ. Франци ҫарӗн нимӗҫсем демобилизациленӗ салтакӗсем те ӗҫсӗр тата выҫӑ пурӑнаҫҫӗ. Нимӗҫсем ҫав демобилизациленӗ салтаксен списокне тума хушнӑ, вӗсене Германире ӗҫлеме «явӑҫтарма» шутлаҫҫӗ. Ҫакӑнпа пӗрлех Франциpи ытти предприятисене те хупа-хупа лартаҫҫӗ.

Франци гитлеровецсем хӗсни декабрӗн пуҫламӗшӗнчех ӗнтӗ Виши «правительстви» хушшинче пӑтрашу пуҫласа янӑ. Ҫав «правительствӑн» членӗсем нумайӗшӗ хӑйсен ыранхи кунӗ мӗнле пулассине пачах та шанмаҫҫӗ. Берлинран хушнӑ тӑрӑх, Лаваль кашни министра тата статс-секретаре отставкӑна тухасси ҫинчен уйрӑм заявлени ҫырса пама хушнӑ. Вӑл заявленисене хӑҫан ҫырнине «кирлӗ вӑхӑтра» Лаваль хӑй лартать.

Ҫурҫӗр Африкӑри вӑрҫӑ ӗҫӗсем

ЛОНДОН, декабрӗн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Официально пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗнер ирхине Англин малта пыракан войскисем Эль-Агейлӑран 60 миля хӗвеланӑҫнерехре тӑракан Матратин патне ҫитнӗ, унта тӑшманӑн кӑнтӑрти позицийӗсене тытса илнӗ. Тӑшманӑн чакса пыракан колоннисене Англи войскисем пысӑк ҫухатусем тӳстереҫҫӗ.

Авиаци ӗнер чакса пыракан противника татах атакӑланӑ. Декабрӗн 16-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Америка самолечӗсем 8 сехет хушши пӗр чарӑнмасӑр Бизертӑри, Тунисри тата Ла Гулетта утравӗ ҫинчи доксем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. «Вӗҫекен крепоҫсем» тапӑнни лайӑх результатсем панӑ. Германи авиацийӗн активлӑхӗ чылаях чакнӑ.

Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Тунисри тӗнӗл держависен войскисем Меджез-Эль-Баба районӗнчен (Тунисран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнелле 30 миляра) чакса пыраҫҫӗ. Ҫапӑҫу лайӑх еннеллех улшӑнчӗ тесе калама пулать, мӗншӗн тесен союзниксем сывлӑшра пуҫпулса тӑраҫҫӗ.

РУМЫНИ БАТАЛЬОНӖНЧИ ПӐЛХАВ

ЛОНДОН, декабрӗн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Британ юнайтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, ҫак кунсенче Румыни салтакӗсен Трансильванири батальонӗнче пӑлхав пулнӑ. Вӗсем пурте Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронта янине хирӗҫ тӑнӑ. Батальона хӗҫпӑшалсӑрлатнӑ та концентрациллӗ лагере янӑ.

КӖСКЕН

- Канадӑра октябрь уйӑхӗ пӗтнӗ тӗле ҫӗнӗрен 10 хими предприятийӗ туса лартнӑ. Вӗсене пурне те ҫитес тӑватӑ уйӑх хушшинче ӗҫе яраҫҫӗ.
- Японире промышленноҫпа транспортӑн 35 компанине пӗрлештерни ҫинчен пӗлтернӗ.

Ответлӑ редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ: начальник планово-финансового отдела, старший диспетчер, бухгалтер, зав. складом Кинорeмснаба, мастера по ремонту киноаппаратуры, слесаря и ученики.

Оплата по соглашению.

Справляться по адресу: гор. Чебоксары, улица Ленина, 21, Управление Кинофикации при СНК ЧАССР. Телефон № 3—95.

Требуются для работы в Чебоксарах: зам. главного бухгалтера, бухгалтер, счетовод-кассир. **Для работы в районах** Чувашской АССР: главные и старшие бухгалтера, бухгалтэра.

С предложением обращаться: г. Чебоксары, ул. Ленина, 64, к главному бухгалтеру.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн — 4—26, промышленность пайӗн 3—99, ялхуҫалӑх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11834 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 53 84 г